25-мĕш çул Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 19 ЫТЛАРИКУН 114(6049) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешӳр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сурамине ирттерес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Советĕсен исполкомĕсене тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çакăнсене çыртăмăр:

23. Шăхасан МТС-ĕнчи трактор бригадисен трактористчĕсем: П. Максимов юлташ, вăл, уйхир ĕçĕсем пуçланнăранпа СТЗ трактора ĕçлесе, хăй сменинче 65 гектар сухаланă, 85 килограмм горючи перекетленĕ, Г. Алексеев юлташ, вăл та, СТЗ тракторпа ĕçлесе, 60 гектар сухаланă, 70 килограмм горючи перекетленĕ, А. Гордеев юлташ, вăл, СТЗ тракторпа ĕçлесе, 46 гектар сухаланă, 98 килограмм горючи перекетленĕ, Н. Яковлев юлташ 50 гектар сухаланă, 62 килограмм горючи перекетленĕ, С. Михеев юлташ СТЗ тракторпа ĕçлесе 44 гектар сухаланă, 102 килограмм горючи перекетленĕ. Вĕсем пурте нормăна кулленех планпа кăтартнинчен ирттерсе тултарса пырасçĕ.

24. Шăхасан районĕнчи «Большевик» колхоз (колхоз председателĕ И. Николаев юлташ). Колхоз тĕштырă тата пăрçа-ясмăк культурисене 7 çу кунĕнче акса пĕтернĕ, мĕнпурĕ 221 гектар акнă. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупачĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма колхоз планран ирттерсе 3 гектар акса хăварнă. Ака вăхăтĕнче бригадирсем — М. Харитонова, В. Иванов, М. Александрова, Л. Иванова юлташсем хăйсене уйрăмăн палăртнă. Акара çак колхозниксемпе колхозницăсем: М. Федорова, С. Максимова, Н. Михайлов юлташсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçленĕ. Вĕсем кулленех планра кăтартнă пек 1,25 гектар сухалас вырăнне 1,5—1,7 гектар сухаласа пынă. Сӳрелекенсем—Н. Степанов, С. Д. Дмитриев юлташсем нормăра кăтартса панă 3 гектар вырăнне кулленех 4—6-шар гектар сӳреленĕ. Тырă акакансем —С. Иванов, Т. Викторов юлташсем кулленех 6—8-шар гектар акнă, норма—3 гектар.

25. Шăхасан районĕнчи Деренин ялĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ И. Степанов юлташ). Колхоз тĕштырă культурисене 7,5 çу кунĕнче акса пĕтернĕ. Планра кăтартса панă 213 гектар вырăнне колхоз 215 гектар акнă, планран ирттерсе 2 гектар акнă. Акара П. Дмитриев юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада хăйне уйрăмах палăртнă. Ку бригада тĕштырăсене 6,5 çу кунĕнче акса пĕтернĕ. Бригадăра М. Александрова, Е. Александрова юлташсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçленĕ: вĕсем кулленех нормăна 130—140 процент тултарса пынă, тырă акакан А. Васильев юлташ кулленхи нормăна яланах 130—135 процент тултарса пынă.

Пахча-çимĕçсене вăхăтра лартса хăварар

Пахча-çимĕçсене лартма вăхăт çитрĕ. Колхозсемпе совхозсен кăçал çĕрулмипе пахча-çимĕç лартмалли çĕр лаптăкне чылай сармалла. Хĕрлĕ Çар боецĕсене, предприятисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене çителĕклĕ таран çĕрулми, пахча-çимĕç туса памалла.

Фабрикăсемпе заводсен подсобнăй хуçалăхĕсенче тата рабочисемпе служащисен кил вырăнĕсенче пахча-çимĕç лартас ĕç те анлăн сарăлса пырать. Партипе правительство çĕршывпа фронта пахча-çимĕç, çĕрулми ытларах туса пама чĕнни пурнăçа кĕрет. Чылай колхозсем кăçал çĕрулмипе пахча-çимĕçсене планран ирттерсе лартаççĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи колхозсенче парниксемпе парникасенче ир пулакан купăста тата помидор калчисене нумай ӳстерчĕç. Калинински районри колхозниксемпе колхозницăсем пахча-çимĕç лартас плана çуррине яхăн пурнăçланă ĕнтĕ, çĕрулмие лартма массăллăн тытăннă.

Анчах пахча-çимĕç лартас ĕçре чылай районсенче çывăх çитменлĕхсем пур. Хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсен руководителĕсемпе агрономсем пахча-çимĕçсене лартас ĕçпе интересленмеççĕ, колхозсене ертсе пымаççĕ. Советски районра пахча-çимĕç калчисене хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те туман тесен те юрать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ районсене пахча-çимĕç лартмалли плана пурнăçламалăх калчасем ӳстерме кирлĕ çинчен хăй вăхăтĕнче кăларту панă. Анчах чылай районсенчи çĕрĕç пайĕсем вăл кăтартăва пурнăçламан. Кишĕр, укроп, пăрçа çимĕçсене лартасси кая юлса пырать. Ку йышши çимĕçсем хуллен шăтаççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем 4—5 градуслă температурăра та шăнса тухса ăнăçлăн ӳсме пултараççĕ. Çавăнпа вĕсене иртерех, çĕр нӳрĕ чухне акма тăрăшмалла.

Çак кунсенчех сухан, кăшман, çарăк, йӳç-кăшман, пăрçасем акса çитермелле. Вылькăк кăшманне çимма та вăхăт çитрĕ. Ир пулакан сурткасене акса пĕтерсе хыççăнах пĕр тăхтамасăр çĕрулми лартма тытăнмалла.

Çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкĕ ӳснине пула хăшпĕр колхозсенче вăрлăхлăх çĕрулми çитмест. Колхозсен çĕрулми вăрлăхне епле пулсан та çитермеллех. Республикăри колхозсенче, пĕтĕмĕшпе илсен, çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ. Çавăнпа колхоз руководителĕсен çĕрулми лартас плана пĕтĕмĕшпех пурнăçлама тăрăшмалла. Çĕрулми тăрăхсене касса вăрлăхлăх хатĕрлессине те анлăн сармалла.

Сухан вăрлăхĕ лартма çитмест пулсан, унăн шăлĕсене уйăрса лартассине хăюллăнрах туса пымалла. Уйăрса лартнă кашни суханăн шăлĕнчен пĕр сухан çитĕнет. Çапла лартнă суханăн тухăçлăхĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, шăлĕсене уйăрмасăр лартнинчен ытларах пулать.

Пахча-çимĕçсене сиенлекенсене хирĕç кĕрешесси пысăк вырăнта пулмалла. Кăçал çимĕçсен калчисене шăписем вăйлăн сиенлеме тытăнни çинчен чылай районсем пĕлтерессĕ. Пахча-çимĕç калчисене шăписенчен, уй пăрçисенчен, сиенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен сыхлас тĕлĕшпе халех пур ĕçсене те тумалла. Парниксемпе парникасене тасалăхра тытас пулать, шăписене пĕтермеллисем тăвас пулать.

Кăçал пирĕн уйрăмах пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илмелле. Çĕрĕç оргăнĕсен, агрономсен, пахча-çимĕç бригадисенче ĕçлекен колхозниксен уй пăрçисене хирĕç кĕрешмелли имçамсене халех хатĕрлесе хумалла. Пахча-çимĕç калчисене упраса çитĕнтерес ĕçе лайăх организацилемелле.

Пахча-çимĕçе пысăк тухăçлăхпа туса илес ĕç те, тырпул тухăçне хăпартас ĕç пекех, колхозсенче ĕç вăйне организациленĕ пĕлнинчен нумай килет. Колхоз правленийĕсен пахча-çимĕç лартса тăвакан бригадăсемпе звенисем организацилесе, вĕсене кулленех ертсе пымалла. Кашни звенона уйрăм çĕр лаптăкĕ сумне çирĕплетмелле, лартнă пахча-çимĕçсен тухăçлăхĕшĕн вăл ответлă пулмалла.

Пахча-çимĕçсемпе çĕрулми лартас вăхăт — ответлă вăхăт. Партипе комсомолăн вырăнти организацийĕсем, совет тата çĕрĕç органĕсем пахча-çимĕç вăхăтлăн лартса хăварассишĕн тăрăшма тивĕçлĕ.

Партипе правительство ытларах пахча-çимĕç, ытларах çĕрулми туса пама хушнине чыслăн пурнăçлар. Çĕршывпа фронта пахча-çимĕç çителĕклĕ туса парар!

Тăван çĕршыв оборонин фончĕ

Республикăри ĕççыннисем тăван çĕршывăн оборона фондне укçа-тенкĕ, государство заемĕсен облигацийĕсене тата тĕрлĕрен хаклă япаласем нумай хываççĕ. Кунсăр пуçне, рабочисем, колхозниксем тата служащисем воскресниксенче ĕçлесе илнĕ укçа-тенке оборона фондне пиншер тенкĕ куçараççĕ. Халĕ республикăра танковăй колоннăсем тата «Пионер Чувашии» танк тума укçа-тенкĕ пухас ĕç пырать. Çапла майпа оборона фондне куçарнă тата пухса панă укçа-тенкĕсен пĕтĕм сумми майăн 11-мĕш тĕлне республикăра 9.864.000 тенке çитнĕ. Вăл шутран Шупашкарти ĕççыннисем 2.088.000 тенкĕ, Улатăрти ĕççыннисем 1.398.000 тенкĕ, Канашри ĕççыннисем 1.069.000 тенкĕ хывнă.

Оборона фондне укçа-тенкĕ хывас ĕç малалла пырать.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсен Харьков енчи ăнăçлă наступленийĕ

Майăн 12-мĕшĕнче Харьков енче пирĕн войскăсем наступлени пуçласа ярса нимĕç войскисен оборонине татса кĕнĕ те, противник танкĕсен пысăк соединенийĕсен тата мотопехотин контратакисене сире-сире пăрахса, Хĕвеланăçнелле куçса пырасçĕ.

Майăн 12-мĕшĕнчен 16-мĕш хушшинче пирĕн чăсем 20—60 километр шалалла кĕрсе кайса халăх пурăнакан 300 ытла пункта ирĕке кăларнă.

Çав вăхăт хушшинче пирĕн войскăсем, малтанлăха палăртнă даннăйĕсем тăрăх, противникăннĕне çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: орудисем — 365, танксем — 25, минометсем — 188, пулеметсем — 379, снарядсем — 46.413 тата уйрăмăн снарядсем тултарнă 89 ещĕк, минăсем — 23.284, патронсем 1 миллион штукăна яхăн, гранатăсем — 13.000, автомашинăсем — 90, радиостанцисем — 29, артиллери, продовольстви тата тĕрлĕрен япала склачĕсем — 38.

Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.200 çынна ытла тытăна илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсене ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: 400 танк, 210 оруди, 33 миномет, 217 пулемет, 700 яхăн автомашина, грузсем тиенĕ лавсем 100 ытла, тĕрлĕрен складсем 12, самолетсем — 147.

Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 12.000 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

Наступлени малалла пырать.

СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВЕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 17-мĕшĕнче **Харьков** енче пирĕн войскăсем, наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, малалла куçнă.

Керчь çурутравĕ çинче Керчь хули районĕнче пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç хĕрӳллĕн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен.

Майăн 16-мĕшĕнче нимĕçсен 65 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 20 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче совет карапĕ противникăн 6.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Майăн 16-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 46 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 90 автомашинине, горючи тултарнă 2 автоцистернине, 3 полевой орудине, зенитнăй пулеметсен 18 точкине, минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи 45 вагона çĕмĕрнĕ, горючисен складне сирпĕтсе янă, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 3 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче кĕрешекен пирĕн войскăсем малалла ăнăçлăн куçса пыраççĕ. Гитлеровецсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Иртнĕ кун хушшинче, уйрăм участоксенче кăна, нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне, 13 танкне, 12 орудине, 22 пулеметне, боеприпассен складне тата тĕрлĕ япаласен складне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* * *

Запрягаев, Соломатин тата Скотный летчиксем, Еремин командир ертсе пынипе, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче «Мессершмитт—109» йышши 2 самолета тата «Юнкерс—88» йышши тепĕр самолета персе антарнă. Унсăр пуçне, вĕсемех, Алферов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири летчиксемпе пĕрле, тăшманăн татах 3 самолетне персе антарнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн боецсем тин кăна йышăнса илнĕ опорнăй пункта гитлеровецсем каялла таварма хăтланнă. Тăшманăн çав контратакине, ăна йывăр çухатусем кӳрсе, сирсе янă. Анищенко юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсем çав çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старши лейтенант Кораблин юлташ командир пулса ертсе пыракан оруди расчечĕ пĕр çапăçура тăшманăн икĕ батарейине, танксене хирĕç пемелли орудине пĕтерсе тăкнă, пĕр блиндажа çĕмĕрнĕ тата противник пехотин пĕр пысăк группине сапаласа янă.

* * *

Старши лейтенант Шепельнов юлташăн танкĕ тăшманăн пĕр танкне, 5 пулеметне, танксене хирĕç пемелли 3 орудине тата гитлеровецсене 30 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Подразделени командирĕ Даниловский юлташ нимĕç танкĕсен группине çывăха янă та, танксене хирĕç пемелли пăшалсенчен тĕл персе, тăшманăн 2 машинине çĕмĕрнĕ. Противникăн ытти танкĕсем каялла çавăрăнса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 61-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак, австриец Иосиф Ф. çапла каласа панă: «Австриецсем çине нимĕçсем çӳлтен кăна пăхаççĕ, «мармеладлă юлташсем» тесе чĕнеççĕ тата ытти тĕрлĕ ятсем хурса мăшкăллаççĕ. Эпĕ гитлерла режима питĕ кураймастăп, çавăнпа та нимĕçсен çарне вăйсăрлатас шутпа мĕн тума май килнине йăлтах туса пытăм. Эпĕ пулеметчик. Каç пулса çитсен эпĕ пĕрре кăна мар, темиçе хут та пулеметран ним тĕлли-паллисĕр çӳлелле пенĕ. Çав майпа эпĕ гитлеровецсен патронĕсене ахалех, мĕн май килнĕ таран нумайрах пĕтерсе тăкма тăрăшнă. Ытти пулеметчиксене те çавăн пек тума вĕрентнĕ.

Эпĕ тыткăна парăнмалли майлă тĕл килессе тахçантанпах кĕтсе пурăнтăм. Анчах тыткăна парăнма пĕрре те çăмăл ĕç мар. Пирĕн малти лини умĕнче минăсем лартса тултарнă хир выртатчĕ. Февраль уйăхĕн варринче пĕр салтак тыткăна парăнас тесе, вырăссен енне кайма шутланă, анчах минăсем çине кĕрсе кайса вилнĕ. Нумаях пулмасть эпĕ кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Нимĕç салтакĕсем разведкăна кайрĕç. Эпĕ нимĕçсем хăйсен разведки çинелле перес çуккине шутласа илтĕм те, юлташсене: шыв йăтса килем-ха, тесе блиндажран тухрăм. Вырăс посчĕсем патне çитрĕм те тыткăна парăнтăм».

* * *

Гитлеровецсем Голландири рабочисене ирĕксĕр йĕркепе Германие массăллăн яма пуçланă. Оккупациллĕ влаçсем голландецсене Германи промышленноçĕпе ялхуçалăхĕнче ĕçлемешкĕн мобилизацилеме хушса приказ панă. Рабочисем фашистла Германие куçкĕретĕнех вилме каймашкăн килĕшмен пирки оккупантсем тем тĕрлĕ йывăр репрессипе хăратаççĕ. Гитлеровецсен хĕçпăшаллă отрячĕсем голландецсене вăйпа ирĕксĕрлесе вагонсем çине лартаççĕ те вĕсене хурал аллине парса Германие яраççĕ.

Майăн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле **Харьков** енче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. **Керчь** çурутравĕ çинче пирĕн войскăсем Керчь хули районĕнче хĕрӳллĕн çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен.

* * *

Харьков енче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисем хирĕç тăнине çĕмĕрсе, малалла куçса пынă. Пирĕн пĕр часть противника хирĕç кĕрешсе 30 оруди, 18 пулемет, 477 винтовка, 38 автомат, 204.000 патрон, 12.900 снаряд, 6.000 мина, 700 граната, продовольстви склачĕ тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 вилли выртса юлнă. Нимĕç салтакĕсене 100 çынна ытла тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем, гитлеровецсене вăйлăн çирĕплетнĕ пунктран хĕссе кăларса, 80 миномет, 3 тупă, 2 ручной пулемет, 150 винтовка, танка хирĕç пемелли 40.000 патрон тытса илнĕ.

Пирĕн пĕр соединенин участокĕнче, винтовкăсенчен ушкăнпа харăс персе, нимĕçсен 2 самолетне ӳкернĕ. Песочин юлташ командир пулса тăракан чаçри Тутовпа Скобелев юлташсен оруди расчечĕ противникăн 5 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче гитлеровецсем пирĕн чăçсене атакăлама хăтланса пăхнă, анчах вĕсене пысăк çухатусем кӳрсе каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 230 вилли выртса юлнă. Противник миномечĕсен 2 батарейине тата 2 огневой точкине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть нимĕçсенне 11 оруди, 30 станковăй пулемет, 11 миномет, продовольствипе ытти япаласен склачĕсем, нумай лавсем тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 17 бомбардировщикĕ пирĕн наступлени туса пыракан войскăсем çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Старши лейтенантăн Бурды юлташăн зенитнăй батарейи противника тĕл персе кĕтсе илнĕ. Нимĕçсен икĕ самолетне персе антарнă. Ыттисем хăйсен бомбисене пирĕн войскăсем çук çĕре пăрахса хăварнă. Тепĕр кунне батарейăри пулеметчиксем «Юнкерс-88» йышши татах икĕ самолета персе ӳкернĕ.

* * *

Партизансен Ж. юлташ ертсе пыракан отрячĕ, Смоленск облаçĕн территоринче нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тылĕнче кĕрешекенскер, юлашки виçĕ уйăх хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна пĕтерсе тăкнă. Партизансем боеприпассен складне, продовольстви складне тата горючи складне çунтарса янă, боеприпассемпе çар пурлăхĕсем тиенĕ 4 поезда ӳпĕнтерсе янă, тăшманăн 3 танкне çĕмĕрнĕ, боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 25 автомашинăна, 35 лава пĕтерсе тăкнă. Пехота хĕçпăшалĕнчен персе партизансем нимĕçсен виçĕ самолетне ӳкернĕ. Виçĕ уйăх хушшинче отряд противникăнне нумай трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра 5 оруди, 7 станковăй тата 37 ручной пулемет, 55 автомат, 340 винтовка, 100 ытла мина, 50.000 патрон, гранатăсем, тумтирсем тата ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç обер-ефрейторĕ Ганс Геллер нумаях та пулмасть Германие Л. Геллер патне çапла çырнă: «Эпир пурте ĕнтĕ хăшпĕр таран ухмаха ертĕмĕр. Пире татăклăнах ухмаха ертсе ярас мар тесен, пире улăштарас пулать. Российăра нервсем питех те çирĕп пулни кирлĕ. Пирĕнтен кашниех тăван çĕршыва кайма ĕмĕтленет. Салтаксем час-часах хурланса шухăша каяççĕ».

* * *

Норвегири паллă партизанăн Х. Ларсенăн отрячĕ кĕрешни çинчен пĕлтерекен хыпара илнĕ. Юлашки икĕ уйăх хушшинче Ларсен отрячĕ белофинсене çĕнĕрен чылай хут пыра-пыра çапнă. Апрель вĕçĕнче партизансем çĕрле чугунçул çинчи пĕр станци çине тапăннă та ăна йышăнса илнĕ. Станци патне нимĕç войскисем ларнă эшелон çывхарса пынă. Партизансем çав эшелона хирĕç паровоз кăларса янă. Крушени пулнă, çавна пула темиçе çĕр гитлеровец вилнĕ. Юлашки икĕ уйăх хушшинче Ларсен партизанĕсем, çӳлте асăннисĕр пуçне, гитлеровецсемпе белофинсене 285 çынна, çар пурлăхĕ тиенĕ 38 автомашинăна, 4 оруди, 16 пулемет пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

Оборона гектарĕсем акаççĕ

ЕТĔРНЕ. Чурпай ялсоветĕнчи «Правда» тата С. М. Киров ячĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем Краснодар крайĕнчи Выселковски районри Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсен чаплă пуçарăвне пысăк кăмăл туса йышăнчĕç. Тăван çĕршыв оборонин фондне хывма, нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке тухнă тата ирĕке тухакан облаçсемпе районсенчи колхозсене пулăшма планран ирттерсе «Правда» колхоз — 4 гектар, Киров ячĕпе тăракан колхоз 5 гектар акса хăварчĕç.

И. ЛЬВОВ.

Тăшмана хирĕç малашне те паттăррăн çапăçса пырăпăр

Н-ски чаçри боецсем, командирсемпе политработниксем Чăваш АССР-ĕнчи ĕççыннисем патне çырнă çыруран

Эпир, Н-ски чаçри боецсем, командирсем, комиссарсемпе политработниксем, орденлă Чăваш республикинчи рабочисене, колхозниксене тата ĕçлĕ интеллигенцие красноармеецла хĕрӳллĕ салам яратпăр.

Пирĕн аслă тăван çĕршыври нумай миллионлă халăхсем, Ленин — Сталин партийĕпе юратнă çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе, нимĕç фашизмне хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче, хăйсен никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре паттăррăн çапăçаççĕ.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăн вунă уйăхĕ хушшинче, тăван çĕршывăн чыслăхне, мухтавлăхне тата никама пăхăнмалăхне хӳтĕлесе, чăн-чăн геройлăх, паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса пачĕ, çапăçу хирĕсенче гитлерла йытăсене çĕмĕрсе пычĕ, çĕмĕрсе пырать тата вĕсене пĕтĕмпе пĕтерсе тăкиччен çĕмĕрсе пырĕ.

Пирĕн пата фронта Чăваш республикинчи ĕççыннисен делегацийĕ килни пирĕншĕн пысăк савăнăç пулса тăрать. Делегаци янăшăн, Майăн пĕрремĕш ячĕпе парнесем ярса панăшăн эпир орденлă Чăваш республикинчи рабочисене, колхозниксемпе ĕçлĕ интеллигенцие чĕререн тав тăватпăр. Эсир пирĕншĕн тăрăшни пире тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешме татах та ытларах хавхалантарать.

Пирĕн соединени çапăçура мухтавлă ĕççем турĕ. Эпир, çапăçусем туса пырса, çĕршер километр малалла кайрăмăр, Германи фашисчĕсен вăрă-хурахла кĕтĕвĕсене хĕвеланăçнелле хăваласа пытăмăр. Пирĕн чаплă боецсем халăх пурăнакан çĕршер пункта фашистла вăрă-хурахсенчен ирĕке кăларчĕç. Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен таса тивĕçне пурнăçа кĕртсе, пирĕн боецсемпе командирсем, комиссарсемпе политработниксем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, нимрен те шикленмесĕр тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Пирĕн чаçсенчи 163 юлташа Правительство Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăларĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем çапăçусенче хăйсене паттăррăн та хăюллăн тытрĕç. Германи захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Совет Правительстви Василий Осипович Осипов юлташа орден парса, Михаил Кузьмич Сандимиров юлташа икĕ орден парса наградăланă.

— Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм! — çакăн пек пирĕн кĕрешӳри лозунг, çав лозунгпа эпир тăшмана хăваласа малалла пытăмăр. Нимĕçсен ирсĕр захватчикĕсем çине таса тарăхупа чĕререн тарăхса, совет çыннисене çаратнăшăн, асаплантарнăшăн тата мăшкăлланăшăн гитлерла бандитсене тавăрса, эпир хамăрăн çул çинче юнлă фашистсен сахал мар войскисене пĕтерсе тăкрăмăр. Эпир малашне те тăшмана хирĕç паттăррăн та хăюллăн çапăçăпăр, фашистла тискер кайăксене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырăпăр, Социализмлă Тăван çĕршыв умĕнче тупа тунине чыслăн пурнăçа кĕртсе пырăпăр.

Хамăрăн кĕрешӳри ялава пулас çапăçусенче эпир чыслăн малалла илсе пырăпăр тесе, эпир совтлă Чăваш çĕршывĕнчи ĕççыннисене чĕререн шантаратпăр. Пирĕн умра хаяр та юнлă çапăçусем тăнине эпир пĕлетпĕр, анчах вĕсене кĕтсе илме эпир хатĕр. Сталин юлташ Майăн пĕрремĕшĕнчи уяв ячĕпе кăларнă приказ пире çĕнĕ вăй парать, тăшмана татăклăнах çĕмĕрсе тăкма хавхалантарать. Пирĕн халăха Германи капиталисчĕсемпе помещикĕсен тарçисем туса хума фашистсем нихăçан та пултараймĕç. Пирĕн халăх виçĕ революци вут-çулăмĕ витĕр тухнă, çавăнпа та вăл хăй çĕнтерсе илнĕ ирĕклĕхсене никама та памĕ. Пирĕн халăх, 20 çул ытла тимлĕн ĕçлесе, хăйĕн чаплă хулисемпе ялĕсене, хăйĕн завочĕсемпе фабрикисене туса лартрĕ, çавăнпа та вăл вĕсене нихăçан та гитлерла вăрă-хурахсене памĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв хаяр испытанисем тӳссе ирттернĕ кунсенче пирĕн кашниннех чĕрере фашистла çынçиенсем тĕлĕшпе таса курайманлăх пулмалла. Пирĕнтен кашниех,—фронтра-и вăл, тылра-и,—хамăрăн юратнă социализмлă тăван çĕршывшăн чĕререн тăрăшса ĕçлеме тивĕçлĕ. Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçленине, тăшмана çĕнтерес тесе пĕтĕм вăйран кĕрешнине эпир пĕлетпĕр. Татах та паттăррăн ĕçлесе тыла çирĕплетесси, фронта татах та вăйлăнрах пулăшасси, — çакăн пек совет патриочĕсен таса тивĕçĕ.

Çĕнтерӳ пирĕн алăра пуласси не эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр. Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Пире çĕнтерӳсен çулĕпе малалла аслă Сталин илсе пырать!

Сывă пулчăр пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ.

Сывă пултăр Ленин — Сталин партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, атте, тус тата учитель аслă Сталин!

Çыру çине Н-ски чаçăн командирĕ, военкомĕ тата политотдел начальникĕ алă пуснă.

Техникăлла культурăсем акассине тата пахча-çимĕç лартассине вăраха ямалла мар!

Çураки республикăра мĕнле пырать

Çанталăк уяртса ăшăтни çуракинчи ĕç хăвăртлăхне ӳстерме май пачĕ. Майăн 15-мĕш тĕлне республикăри колхозсем çуртыррисене пĕтĕмпе 177.339 гектар акнă, çакă вăл çуртырри акмалли планăн 50,5 проценчĕ пулать.

Калинински, Хĕрлĕ Чутай, Шăхасан, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле районĕсем тĕштырă акмалли плана тултарнă.

Уйхир ĕçĕсене Калинински районри колхозсем уйрăмăнах организованно туса пыраççĕ. Кунта 8.400 гектара яхăн акнă, çакă вăл çуртыррисем акмалли планран 77,2 процент пулать. Шăхасан районĕнчи колхозсем юлашки пилĕккунлăх хушшинче ĕçĕн хăвăртлăхне кунран кун ӳстерсе пынă. Майăн 10-мĕшпе 15-мĕш хушшинче вĕсем 5.753 гектар акса, республикăра иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Вăрнар, Шупашкар тата Ишлей районĕсенчи колхозсенче ĕçĕн хăвăртлăхĕ икĕ хут ӳснĕ. Çав районсем майăн 10-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшне çитиччен акнă çĕр лаптăкне 42—46 процент ӳстернĕ, унччченхи пилĕккунлăхра, майăн 5-мĕшпе 10-мĕш хушшинче, вĕсем акнă çĕрĕн лаптăкне 20 процент кăна ӳстернĕ пулнă.

Малтанхи пекех Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем çураки ĕçĕсене çине тăрса тимлĕн туса пыраççĕ.

Тĕштырăсем акса пĕтерсе, Калинински районри колхозсем каярах юлса акмалли культурăсене акма тытăннă. Пĕр çул ӳсекен курăксем акмалли плана кунта 82 процент тултарнă, çĕрулми 124 гектар лартнă. Советски район силос тата выльăх апачĕн культурисем акмалли плана 63 процент тултарнă. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, техникăлла культурăсемпе выльăх апачĕсем валли акса хăварасси республикăра халлĕхе вăрахăн пырать.

Çураки ĕçĕсен хăвăртлăхĕ Кувакино, Улатăр, Шăмăршă, Пăрачкав тата Первомайски районсенче малтанхи пекех тӳсме çук япăх. Ку районсенче пилĕккунлăхра акнă çĕр лаптăкĕ 11—14 процентран ытла мар. Çанталăк лайăхланнă пулин те, çав районсем çаплах-ха ĕçе хускатса ярайманççĕ, çураки ĕçĕсене хăвăртлатма кирлĕ майсемпе усă курмаççĕ.

Красноармейски, Элĕк, Çĕрпӳ районĕсем çураки ĕçĕсен хăвăртлăхне чылай чакарчĕç. Красноармейски район, майăн пуçламĕшĕнче республикăра виççĕмĕш вырăн йышăнса тăнăскер, халĕ вунпĕрĕмĕш вырăна çити чакса ларнă.

Çураки ĕçĕнче Етĕрне, Улатăр, Шăмăршă, Куславкка МТС-сем юлса пыраççĕ. Вĕсем ĕç планне тултараймаççĕ. Кунта тракторсем час-часах ĕççĕр лараççĕ.

МТС-сен ĕçĕпе политотделсен çеç мар, парти райкомĕсен те куллен интересленмелле. Государство планне МТС-сем мĕнле пулсан та тултармаллах.

Партипе совет организацийĕсен, çĕр ĕç оргăнĕсен, МТС директорĕсемпе колхоз председателĕсен çуракине хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене пурне те йышăнмалла. Тракторсемпе тата чĕрĕ туртăм вăйĕпе туллин усă курмалла, тракторсене икĕ сменăпа ĕçлеттермелле.

Ирхи тĕштырăсене акса пĕтернĕ колхозсен хăйсен ĕç вăйĕсемпе туртăм вăйĕсене техникăлла культурăсем, выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç культурисем тата пахча-çимĕçсем акса хăварас ĕçе куçармалла.

Колхозниксем вăрçă чухнехи хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). Районри нумай колхозсем çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Майăн 14-мĕш тĕлне районри колхозсем пурĕ 12.348 гектар сухаланă, 11.418 гектар тĕштырă акнă. Кунсăр пуçне 147 гектар кок-сагыз акнă.

«Çĕнтерӳ», «Хĕрлĕ Шăхаль», «Париж Коммуни», «Çĕнĕ пурнăç», «Тукас» тата ыттисем те (пурĕ 19 колхоз) тĕштырăсем акса пĕтерчĕç. Асăннă колхозсем çуракинче тимлĕн ĕçлерĕç. Пĕр сехете те сая ямарĕç.

Тупахри «Тукас» колхоз, иртнĕ çулсенчи çуракисенче кая юлса пынăскер, кăçал районри малти вырăнсенчен пĕрине йышăнчĕ. Кунта пурĕ 354 гектар тĕштырра 6 кунта акса пĕтерчĕç. Кунсăр пуçне тымар-çимĕçсем акма 6 гектар, çĕрулми лартма 30 гектар, ытти йышши пахча-çимĕçсем лартма 3 гектар тата техникăлла культурăсем акма 7 гектар сухаласа хучĕ. Колхозра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлнă. Ăмăртура иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăсем ырми-канми ĕçлесе пуринчен малта пычĕç.

Конюх Осипов лашасене лайăх пăхать. Ирхине виçĕ сехет тĕлне ĕç лашисене йăлтах тăрантарса çитерсе, вĕсене уя тухма хатĕрлесе ĕлкĕртет. Ĕç лашисемпе тата тракторсемпе туллин усă кураççĕ. Колхозра кунне икĕ хут вĕри апат çитереççĕ. Апатне ĕçлекенсем патне уя илсе тухаççĕ.

Колхозра политикăлла-массăллă агитаци ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Агитатор Волков çураки вăхăтĕнче икĕ номер стена хаçачĕ кăларчĕ. Сельпо продавщици М. Архипова табак, спичка, супăнь тата ытти кирлĕ таварсем сутма уя илсе тухать.

Çуракине райсоюз та лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Вăл çураки валли 20 пин тенкĕлĕх табак, 18 пин тенкĕлĕх супăнь, 7 тонна мазь, спичка, сахăр, ача площадкисем валли игрушкăсем тата ытти япаласем те кӳрсе килнĕ.

Çав хушăрах районра япăх ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Килтĕшри «Комбайн» колхоз майăн 15-мĕш тĕлне пурĕ те 160 гектар çеç сухаланă. Унăн пĕтĕмпе 395 гектар акмалла. Кунашкал начар ĕçлекен колхозсем татах та пур. Паллах, çакă вăл колхоз руководстви хăйĕн ĕçне япăх ертсе пынинчен килет. «Комбайн» колхозри бригадăсем пĕри те колхозри ĕç нормине тултармаççĕ. Районри çĕрĕç отделĕн çакăн пек кайра пыракан колхозсем çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхмалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем умĕн

Вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн

СЕНТĔР, майăн 18-мĕш. (Хамăр корр.). Райсовет исполкомĕ çак кунсенче Муркашри вăтам шкулăн тата Мускаккассипе Пушкăртри туллимар вăтам шкулсен отчечĕсене итлерĕ. Çак ялсенче ачасене пурне те вĕрентес ĕç пурнăçа кĕрсе пыни курăнчĕ. Вĕренӳ çулĕн виççĕмĕш чĕрĕкĕнче Муркашри вăтам шкулта 58 ача, Мускаккассинчи шкулта—18 ача тата Пушкăртри шкулта 16 ача вĕренме пăрахнă. Нумай ачасем уроксене сиктерсе çӳреççĕ. Вĕренекенсен хушшинчи дисциплина тивĕçлĕ вырăнта мар. Мускаккассинчи туллимар вăтам шкулăн V-мĕш класĕнче пурĕ 21 ача вĕренет. Анчах та вĕсенчен нумайĕшĕ шкула йĕркеллĕн çӳремеççĕ. Апрелĕн 29-мĕшĕнче шкула 13 ача пыман.

Муркашри вăтам шкулта та çавах. Шкул директорĕ Ведина юлташ [illegible] уроксене йĕркеллĕ çӳремен ачасем патне [illegible] ашшĕ-амăшĕсемпе калаçнă, вĕсене [illegible]. Çапах та [illegible] 13 ача [illegible] вĕренме [illegible].

Вĕренӳ çулĕ вĕçленсе пынă вăхăтра [illegible] вĕренекенсем [illegible] программăна [illegible] Райсовет исполкомĕ [illegible] Райсоюз [illegible] тăрăшмалла [illegible] пĕлӳ тĕрĕслевне [illegible] шкулсен [illegible] вĕрентме [illegible].

Районри çутĕç отделĕн вĕренӳ çулне [illegible] тăрăшмалла. [illegible] Çакăн пирки конституци тата истори урокĕсене уроксене [illegible] воспитани парасси çинчен [illegible].

Г. АКИМОВ.

Хатĕрленӳ хĕрӳллĕн пырать

ИШЛЕИ. Ишекри вăтам шкул ачисен çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне иртерме пикенсе хатĕрленет. Халĕ учительсем вĕренӳ çулĕнче [illegible] çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. [illegible] Шкулта [illegible] вĕренекенсем [illegible] консультацисем [illegible] пуçласçĕ. Классенче повторени урокĕсем пыраççĕ.

[illegible] Хатĕрлев вăхăтĕнче [illegible] М. Рахманова, Н. Данилова, Е. Леонтьев, Порфирьев вĕренекенсем [illegible] отличнăй [illegible].

[illegible] Шкулта [illegible] библиотека ĕçлет. [illegible] консультацисем [illegible].

Шкул ачисем пĕлӳ тĕрĕслевне лайăх хатĕрленнипе пĕрлех ялти колхоза пулăшаççĕ. Шкулăн 2 гектар çĕр пур. Ку çĕр çине лартма хăйсен парникĕсенче купăста, помидор, дыня калчисене ӳстереççĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Çамрăк выльăхсене контрактацилемелли плана пурнăçламан

ЕТĔРНЕ. Выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе «Комбайн» колхоз чылай ĕçсем турĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Чăваш республикинчи колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленинче тĕп вырăна хурса, колхоз хăйĕн фермисенче выльăх-чĕрлĕх йышне 1942 çулта палăртнă хисепе çитерессишĕн тăрăшса ĕçлет. Партипе правительство йышăннă постановление колхоз ăнăçлăн пурнăçларĕ. 1941 çулта колхозăн фермисенче мăйракаллă шултăра выльăхсем 90, сурăхсем 110, сыснасем 40 пуç пулнă пулсан, паянхи кун вĕсен шучĕ: [illegible] 112 пуç, сыснасем 41 пуç шутланаççĕ.

Фермăсене ĕçлекенсем (заведующийĕ В. Долгов) выльăхсене лайăх пăхса усраççĕ. Анчах та колхоз çамрăк выльăхсене контрактацилемелли плана сӳрĕккĕн пурнăçласа пырать. План тăрăх 5 пăру, 20 путек контрактацилемелле пулсан, 12 пăру контрактациленипех ĕç чарăннă. Путексене контрактацилемен.

Я. СОРОКИН.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче самолетсем тăвасси ӳссе пырать

1938 çулта Америкăри авиаци заводĕсем уйăхне çĕр самолета яхăн туса кăларса тăнă.

Пĕрлешӳллĕ Штатсем наци оборонин программине йышăннă хыççăн 1940 çулти çуркунне тĕлне уйăхне 500 самолета яхăн туса кăларма тытăннă. Çав вăхăтра Рузвельт Америкăн авиаци промышленноçĕн хăватне çулталăкне 50.000 çити самолет кăлармалăх ӳстерме кирлине кăтартса конгреса послани янă.

Пĕлтĕрхи пĕрремĕш кварталта Пĕрлешӳллĕ Штатсен авиаци промышленноçĕ уйăхне 1.000-шер самолет кăларса тăнă, пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕ тĕлне вара унтан икĕ хут ытларах туса кăларма тытăннă. Ун хыççăнхи уйăхсенче миçешер самолет туса кăларса тăни çинчен даннăйсене пĕлтермен, анчах та США çак вăрçа хутшăнсан виçĕ уйăх иртсен, официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕччĕ: самолетсем туса кăларасси çак вăхăт хушшинче 50 процент ӳснĕ, тенĕччĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи нумай предприятисем, çав шутра автомобиль тăваканнисем те, хальхи вăхăтра ĕнтĕ авиаци валли ĕçлеме тытăннă.

Авиаци производствин палăртса хунă программинче чи малти вырăна бомбардировщиксем тăвассине лартнă. Истребительсемпе бомбардировщиксемсĕр пуçне, разведчиксем, транспортнăй тата учебнăй самолетсем чылай туса кăлараççĕ. Америкăри предприятисенче хăвăрт çӳрекен, нумай груз йăтма пултаракан тата инçене вĕçме пултаракан çĕнĕ, лайăх йышши самолетсем тăвас тĕлĕшпе пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ, проектсем тăваççĕ. (ТАСС).

Югослави партизанĕсен кĕрешĕвĕ вăйланать

СТАМБУЛ, майăн 16-мĕш. (ТАСС). Югославире май уйăхĕн пуçламĕшĕнчен тытăнса партизансен кĕрешĕвĕ чылаях вăйланса кайнă. Партизансен кĕрешĕвĕ сарăлнине нимĕç фашисчĕсен аллинчи Недич «правительстви» кăларакан «Ново време» хаçат та пытараймасть. Çав хаçат пĕлтернĕ тăрăх, майăн малтанхи кунĕсенче Недичăн тара тытнă отрячĕсемпе партизансем хушшинче Сврлыг сăрчĕсем çинче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Çав çапăçусем паян кунччченех пыраççĕ. Партизансен икĕ ушкăнне малтан Недич отрячĕсем çавăрса илнĕ пулнă. Партизансен ушкăнĕсем, Недич войскисенункине татса тухса, хăйсен тĕп вăйĕсемпе пĕрлешнĕ.

Партизансен кĕрешĕвĕ çавăн пекех Смедеровск—Паланка районĕнче те вăйланнă. Ку районри партизансем, пĕчĕк ушкăнсемпе çӳресе, Недич отрячĕсемпе нимĕç оккупанчĕсен хуралĕсем, обозĕсем тата базисем çине кĕтмен çĕртен пыра-пыра тапănаççĕ.

Партизанла кĕрешĕвĕн активлă операцийĕсем пуринчен ытла Ниш районĕнче пулса иртеççĕ. Хĕллехи вăхăтра кунти партизансем хăйсем валли аван тĕреклетнĕ базăсем тата нумай тĕлте оборона рубежĕсем туса çирĕплетнĕ. Ку вырăнта противник контратакăсем тума хăтлансан, яланах пысăк çухатусем тӳссе каялла чакать. Партизансем оперативно ĕçлеççĕ, çапăçура тактика искусствипе усă кураççĕ.

Недич хаçачĕсем çырнă тăрăх, партизансен Ниш районĕнчи отрячĕсем хӳхĕм хĕçпăшалланнă. «Ново време», хаçатăн майăн 6-мĕшĕнче тухнă номерĕ—çав партизансен ушкăнĕнчи кашни виçĕ çынна пĕр автомат тивни çинчен пĕлтерет.

Юлашки вăхăтра партизансем çавнашкалах Прокупльe районĕнче те вăйлăн ĕçлеме пуçланă.

НИМĔÇСЕМ БОЛГАРИРЕ ХУÇАЛАНАÇÇĔ

АНКАРА, майăн 16-мĕш. (ТАСС). Софирен килекен çынсем каласа панă тăрăх, Болгари хальхи вăхăтра нимĕçсем оккупациленĕ çĕршыв пекех туйăнать. Чăн та, резервсем çителĕклĕ мар пирки, нимĕçсем хăйсен Болгарире тăракан войскисенчен нумайĕшне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне кăлара-кăлара яраççĕ, çапах та кунта юлакан вăйĕ вĕсен пĕтĕм Болгари çĕрне контрольлесе тăма çителĕклĕ.

Юлашки вăхăтра Болгарире нимĕçсем гестапо агенчĕсен йышне нумайлатнă; вĕсем государство учрежденийĕсенче, предприятисенче, чугунçулсем çинче, полици хушшинче тата ытти çĕрте те тăраççĕ.

Болгарирен пĕтĕм продовольствипе чĕртавара йăлтах çаратса Германие илсе кайнă, çакăн пирки болгар халăхĕ фашистла оккупантсене кураймасăр çавтери вăйлăн ӳсет. Эрнере виçĕ кун болгарсем çăкăр пĕртте илеймеççĕ. Пĕтĕм çĕршывра выçлăх ӳснине пăхмасăрах, Софири тата ытти пысăк хуласенчи ресторансем те ĕçсе-çисе ашкăнакан нимĕçсемпе тулса ларнă.

Фашистсем болгар хĕрарăмĕсене пусмăрлани çинчен калакан хыпарсем кунран кунах илтĕнеççĕ. Шкулта вĕренекен хĕрачасене нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем пусмăрласси питех те нумайланнă пирки, Болгарири çутĕç министерстви юлашки вăхăтра уйрăм циркуляр салатнă.

СОФИЯ, майăн 16-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть çутĕç министерстви çумĕнче гимнази директорĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Çак канашлу «вĕренекенсем хушшинче государствăна хирĕç тăвакан ĕçсемпе вирлĕнрех кĕрешме кирлине» кăтартакан решени йышăннă. Гимназисен директорĕсене «государствăна хирĕçле идейăсене вăрттăн е уççăн саракансене» пурне те пĕр тытăнса тăмасăрах гимназирен кăларса яма хушнă. Гимназистсене «шанчăксăр» çын патĕнче хваттерте пурăнма е апат çисе тăма чарнă. Кашни вĕренекене уйрăм кĕнеке памалла. Вĕренекен хăйне мĕнле тыткалани çинчен çав кĕнекене учительсем кăна мар, священниксем те, хуласемпе ял пуçлăхĕсем те тата ытти ĕçлĕ çынсем те çырса пама пултараççĕ.

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

Чăваш республикинчи ĕççынннисем Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли уйрăмăнах тăрăшса парнесем пухса ячĕç.

Посылкăсем ăшне хунă çырусем, рабочисемпе колхозниксен фронт валли парнесем пухас ыйтупа пухăннă пухăвĕсен протоколĕсем халăх хăйĕн тăван çарне, социализмлă тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, чыслăхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен хăйĕн ывăлĕсене, тăванĕсене хĕрӳллĕн юратнине кăтартса параççĕ.

Пирĕн çĕршывра халăхпа çар тачă пĕрлешсе тăраççĕ. Пирĕн халăх хальхи вăхăтра хăйĕн çарĕн пурнăçĕпе тата унăн интересĕсемпе пурăнать.

Çакна ăнланмалла ĕнтĕ, мĕншĕн тесен урса кайнă тăшмана хирĕç пыракан çапăçусен хирĕсенче унăн мухтавлă ывăлĕсем кĕрешеççĕ, вĕсене пирĕн большевикла парти, пирĕн юратнă çулпуç, аслă полководец Сталин юлташ вĕрентсе ӳстернĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисен 9 çынран тăракан делегацийĕ апрелĕн 16-мĕшĕнче фронта тухса кайрĕ. Пирĕн çул халĕ нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă хуласем витĕр—Нарофоминск, Малоярославец, Тихонова Пустынь хулисем витĕр тухрĕ. Эпир нимĕç фашисчĕсем çав хуласемпе станцисене калама çук тискеррĕн çĕмĕрсе хăварнине куртăмăр. Çулăн икĕ енĕпе те юхăнтарса хăварнă, çунтарса янă ялсем, кăмака трубисем, ванчăксен куписем ирте-ирте юлаççĕ. Эпир фронта мĕн чухлĕ ытларах çывхарса пытăмăр, ылханлă тăшман çине çавăн чухлĕ вăйлăнрах тарăхса пытăмăр. Çав вăхăтрах эпир халĕ ирĕке кăларнă чугунçулсене, кĕперсене, хуласене юсаса ура çине тăратнине савăнса куртăмăр. Пирĕн чаçсем кирек хăш хулана тата станцие илнĕ хыççăнах, унта хуçалăха ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕç вĕреме тытăнать. Çакă ĕнтĕ фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă çынсемшĕн пирĕн Совет Правительстви тăрăшнине кăтартса парать.

Фронта çитсен эпир арми командованийĕпе тĕл пултăмăр. Кайран часть командованийĕпе те тĕл пултăмăр. Тĕл пулу çавтери ăшă кăмăлпа иртрĕ, пире хамăр тахçанах паллана, çывăх, тăван юлташсемпе тĕл пулнă пек туйăнчĕ.

Кирюхин юлташ пире хăй командир пулса ертсе пынă чаçăн кĕрешӳ çулĕпе паллаштарчĕ. Çак часть çĕршер километр малалла кайса, халăх пурăнакан темиçе пункта ирĕке кăларнă.

Çул çинче кирек мĕнле йывăрлăхсем тĕл пулсан та, пирĕн боецсем, командирсемпе политработниксем вĕсене Хĕрлĕ Çар воинне тивĕçлĕ хастарлăхпа çĕнтерсе пынă.

Эпир фронтра вăрçăри эпизодсем, паттăр ĕçсем çинчен каласа панине нумай илтрĕмĕр.

Эпир малти линисенче, подразделенисен наблюдательнăй тата командăй пункчĕсенче пултăмăр. Боецсемпе калаçрăмăр, чаçсенчи активăн пухăвĕсенче тухса каларăмăр. Чăваш республикинчен килнĕ хамăрăн землякселпе тĕл пултăмăр. Пур çĕрте те эпир пысăк хаваслăх куртăмăр. Халĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар пĕтĕмпех çавăн пек хаваслăхпа хавхаланса пурăнать. Боецсен шухăш-кăмăлĕ çирĕп, вĕсем хăйсем çине шанса тăраççĕ, пирĕн таса çĕр çине килсе тапăннă нимĕç бандичĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкас тесе çапăçăва кĕрес кăмăлпа çунаççĕ.

Эпир совет çĕршывĕн паттăр çыннисене куртăмăр, вĕсем çапăçура чаплă ĕçсем тунăшăн правительство наградине илнĕ.

Акă пирĕн умра Михаил Кузьмич Сандимиров, чăваш. Ăна нумаях та пулмасть иккĕмĕш хут наградăласа Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă. Вăл çапăçу хирĕнчен 100 боеца ытла илсе тухнă. Унăн шинельне виçĕ çĕрте пуля шăтарса тухнă, унăн пӳрнисене тăм илсе янă пулнă, анчах вăл çапăçу хирĕнчен нихăçан та тухса кайман.

Пирĕн чаплă земляк, чăваш, Лаврентий Константинович Константинов артиллериста 1942 çулти майăн 1-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине парса наградăланă; С. хулишĕн пынă çапăçусенче вăл тӳрех персе противник атакине сирсе янă. Нимĕçсем хĕçпăшала пăрахса хăварса каялла тарнă.

Çĕрпӳ районĕнчи Çĕнĕ Салари колхоз председателĕ пулнă Силантьев разведчикпа та эпир паллашрăмăр. Пĕр çапăçура, нимĕçсенчен 100 метрта Силантьев çине вăйлăн персе тăнă. Вăл çухалса кайман, чугунçул çинчи будкăна кĕрсе кайнă та, икĕ нимĕçе вĕлерсе, хăйĕн боецĕсен ушкăнне çăлса хăварнă. Силантьева «За боевые заслуги» медаль парса наградăланă.

Пире хамăрăн 7 боец Л. ялĕ патĕнче 60 фашиста хирĕç кĕрешни çинчен каласа пачĕç.

Вăйлă çапăçу пынă, комиссара амантнă. Çапăçăва ертсе пырас ĕçе разведка командирĕ Иванов хăй çине илнĕ, вăл фронта кайиччен Канашпа Шупашкар хушшинчи чугунçул çинче ĕçленĕ. Вăл ертсе пынипе 7 боец пулăшу пырса çитиччченех высотана хӳтĕлесе тăнă, вара тăшмана ялтан тапăкланах хĕссе кăларнă.

Эпир фронтра чаплă совет хĕрарăмĕпе Маруся Пехтеревăпа тĕл пултăмăр, вăл Шупашкарти госпитальре ĕçленĕ, кайран хăй ирĕкĕпех фронта кайнă. Л. ялĕ патĕнче хаяр çапăçу пынă. Ял патне пымалли вырăн тӳрем пулнă, çавăнпа та яла штурмпа илмелле. Аманнă боецсене илсе тухма çавтери йывăр. Апла пулин те çав çапăçура Пехтерева 37 боеца илсе тухса çăлнă. Аманнă боецсене нихăшне те çапăçу хирĕнче хăварман.

Пĕр çапăçура Пехтеревăн ездовойĕпе санитарĕ стройран тухнă пулнă, вăл икĕ талăк çимесĕр пурăннă, тăватă талăк çывăрман. Анчах хăйĕн юлашки вăй-халне пухса, вăл çапăçу хирĕнчен аманнисене çĕклесе тухма кайнă. Пушă вăхăт пур чухне боецсем патне патронсем леççе тăнă, вĕсемпе пĕрле гитлеровецсем çине пăшалран пенĕ. Пехтерева çапăçу хирĕнчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн членне—Н. М. Семенова çĕклесе тухнă.

Хĕрлĕ Çар воинĕсен геройла ĕçĕсем çинчен вĕçĕмсĕр нумай каласа пама пулать.

Çапăçура паттăрлăх кăтартнăшăн Жатакпаев командир пулса ертсе пыракан чаçăн пĕрремĕш батарейине Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. С. хули çывăхĕнче тата Ч. ялĕ патĕнче çав батарея нимĕçсен контратакисене темиçе хутчен сирсе янă. Фронтра пулнă вăхăтра батарея противникăн миномечĕсен виçĕ батарейине, артиллерин икĕ батарейине, 25 огневой точкине ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Орденсемпе медальсем илнисем батарейăра 12 çын.

Майăн 1-мĕшĕнче чаплă обстановкăра, вăрманта, чи лайăх боецсене строй умĕнче Чăваш АССР Верховный Советĕн Хисеплĕ грамотисене панă. Боецсем: «Совет Союзне служить тăватпăр», тесе, грамотăсене алла илнĕ. Грамотăсем илнисен ячĕпе Бляшкинпа Эрре (ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ пулнăскер) юлташсем тухса каласа, пире, чăваш халăхĕн представителĕсене, вĕсем хăйсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç татах та вăйлăнрах кĕрешме, тăван çĕршывшăн юлашки юн юлмиччен çапăçма сăмах пачĕç. Германи фашизмне çĕнтерессине вĕсем çирĕп шанса тăни çинчен чăваш халăхне каласа пама ыйтрĕç.

Боецсемпе калаçнă чухне Чăваш АССР делегачĕсем хăйсен предприятийĕсем, колхозĕсем мĕнле ĕçлени çинчен, халăхăн ĕçри, производствăри çĕкленĕвĕ çинчен каласа кăтартрĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн çитĕнĕвĕсем çинчен Елизаров юлташ тата Улатăр районĕнчи Стемасри колхозăн ĕçĕсем çинчен Яблонский юлташ каласа панисене боецсем питех те тимлĕн итлерĕç.

Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем пирĕн умма, чăваш халăхĕн представителĕсем умне, чылай задачăсем лартрĕç: çуракине тата тырпулсене пухса кĕртессине вăхăтра, лайăх туса ирттермелле, акмасăр пĕр гектар та хăварма юрамасть; фронт валли боеприпассем ытларах памалла, фронтпа тыл валли аш-какай çителĕклĕ парса тăма выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн ытларах тăрăшмалла тата ыттисем те. Çакăн çине ответлесе, боецсем: эпир ирсĕр фашистсене çапса аркатăпăр, вĕсене совет çĕрĕ çинчен хăваласа ярăпăр, тесе каларĕç.

Унта, фронтра, эпир фронтпа тыл тачă çыхăнса тăнине нихăçанхинчен лайăхрах туйса илтĕмĕр, ку çыхăну боецсемпе командирсене, политработниксене халăхшăн, тăван çĕршывăн чыслăхĕшĕн паттăррăн кĕрешме хавхалантарать, ку çыхăну тылри боецсене те хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеме чĕнет.

Эпир Чăваш АССР ĕççыннийĕсен ячĕпе малашне те çăкăр, аш-какай тата ытти апат-çимĕçсем те парса фронта ытларах пулăшса тăма, промышленность валли чĕртавар ытларах пама сăмах патăмăр. Чăваш халăхĕ Ленин—Сталин партине мĕнпур чĕререн парăнни çинчен, малашне те вăл тыла çирĕплетсе пыма, фронта пур енĕпе те пулăшса пыма мĕнпур вăйпа тăрăшасси çинчен, халăх пĕр шухăшпа, фронтпа пĕрле пĕр тĕллев тытса пурăнни çинчен, гитлерла мерзавецсене часрах аркатса тăкас, совет çĕрне вĕсенчен тасатас шухăшпа пурăнни çинчен эпир командованине, боецсене, командирсемпе политработниксене шантарса каларăмăр.

Çаксем пурте Чăваш АССР-ĕнчи ĕççыннисене пурне те фабрикăсенче, заводсенче, колхозсен уйхирĕсенче татах та тимлĕнрех ĕçлеме, ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пыма, хĕрарăмсене ытларах ĕçе хутшăнтарма, çапла вара фронта кирлĕ продукцисем ытларах туса хатĕрлеме хушаççĕ.

Фронт пирĕнтен ыйтнине парса тăрас ĕçе Чăваш республикинчи ĕççыннисем чыслăн пурнăçа кĕртессине эпир шанса тăратпăр. Кун пирки иккĕленӳ пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен пирĕн ĕçсене çапăçусенче çирĕпленнĕ коммунистсен партийĕ ертсе пырать, пирĕн ĕçсенче яланах аслă Сталин çул кăтартса пырать.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем! Фронт пирĕнтен татах та лайăхрах ĕçленине кĕтет. Фронтри çынсем хăйсене хĕрхенмесĕр, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр тăшмана пĕтерсе тăкассишĕн çапăçаççĕ. Çавăн çине ответлесе, фронтпа тыл хушшинчи çыхăнăва татах та ытларах çирĕплетер, колхозсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул туса илессишĕн, заводсенче пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн, всевобуч подразделенийĕсен ĕçĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн шкулсенче отлично вĕренессишĕн татах та вăйлăнрах ĕçлер.

Чăваш республикинчи кашни ĕççыннин вăл фронта татах мĕнпе пулăшма пултарни çинчен пĕрмаях шухăшлас пулать. Çак задачăна татса пани совет халăхĕ юнлă фашизма хирĕç кĕрешес ĕçе татах та ытларах тĕреклетме май парать.

Пирĕн аслă полководецăн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, эпир тăшмана çĕнтерме геройла Хĕрлĕ Çара пулăшмашкăн кунĕн-çĕрĕн ĕçлĕпĕр; фашизма пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмашкăн пирĕн пĕтĕм вăй-хала пухмалла, фронт пирĕнтен мĕн ыйтнине пĕтĕмпех парса тăрас пулать.

Тылра çĕнĕ çĕнтерӳсем, фронтăн вăй-халне ӳстерме пулăшакан çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешĕве—малалла!

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ
А. МАТВЕЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 791

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 280. Ф. 6. 58 84 [illegible]